**Профилактика канашĕн ларăвĕ хыççăнхи шухăшсем**

# Эрех пуçа минретет, пурнăçа та пĕтерет

Право йĕркине пăсассинчен профилактика тăвассипе ĕçлекен комисси хăйĕн иртнĕ ларăвĕнче «2006-2008 çулсенче Муркаш районĕнче право йĕркине пăсассинчен профилактика ĕçĕсене тумалли комплекслă мерăсем» мĕнле пурнăçланнине пăхса тухрĕ тата – урамсемпе ытти обществăлла вырăнсенче право тĕлĕшĕнчен йĕрке тăвасси, Муркаш районĕнче экстремистла пулăмсене хирĕç тăрасси çинчен.

Палăртмалла, районти шалти ĕçсен пайĕ те, район администрацийĕнчи тĕрлĕ комиссисем те хăйсен ĕçĕсене кирлĕ пек туса пыраççĕ. Анчах... Районти шалти ĕçсен пайĕн сводкисенче право йĕркине пăснă тĕслĕхсем пĕрин хыççăн тепри хушăнса пыраççĕ. Апла пулсан, ларура палăртнă пек, обществăлла вырăнсенче йĕрке тăвассине общественноçа хăйне те явăçтармалла. Сăмах кунта ирĕклĕ халăх дружинисем пирки пырать. Хальлĕхе вĕсен йышĕнче районĕпе 82 çын. Чупса пырсах унта çырăнакансем курăнсах каймаççĕ-ха. Районти шалти ĕçсен пайĕн обществăлла хăрушсăрлăх милицийĕн пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыракан В.М. Максимов палăртнă тăрăх, халăх дружинникĕсене хавхалантарас мерăсене пăхни вырăнлă пулмалла.

Халĕ вара пĕрле шухăшласа пăхар-ха. Преступленисен йышне чакарасси вĕсен сăлтавне пӳлсе хунинче мар-и? Çаплах вĕт.

– Эрехпе иртĕхесси сарăлсах пырать, – район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн çак шухăшĕнче ĕнтĕ преступленисен тĕп сăлтавĕ.

Тунă преступленисенчен ытларахăшне çынсем шăпах çак шĕвекпе пуçа минретнĕ хыççăн тăваççĕ. Ку пĕрре. Эрех-сăра ĕçекенсен йышĕ çамрăксемпе хушăнма пуçларĕ. Ку тепре. Районти çул çитмен çамрăксемпе тата вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комиссинче профилактика учетĕнче 68 çул çитмен çамрăк учетра тăрать пулсан, вĕсенчен 38-шĕ...– эрех-сăра ĕçнĕшĕн. Чăн-чăн инкек мар-и вара çакă ашшĕ-амăшĕшĕн? Тата юлашки вăхăтра хĕрарăмсем, çамрăк хĕрарăмсем ĕçме пуçланине шута илсен...Мĕн тăватпăр эпир капла хамăрпа хамăр?!

Е тата хăйсен ирĕкĕпех пурнăçран уйрăлакансене илер. Урă пуçпах хĕреслĕ ялтан каялла ярас çуккине ăнланма пулатех пуль. Тăвансене, çывăх çынсене хуçса хăварни çинчен. Ку таранччен районта пулнă суицидсенчен çурри ылта ӳсĕрле пулнă. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕн çумĕ О.Ю. Попова палăртнă тăрăх, реанимаци палати те эрех ĕçсе наркăмăшланнă çынсемпех тулса тăрать.

– Çĕрĕпе ĕçлекен магазинсене çĕрле эрех суттарма чармалла, – теççĕ пĕрисем.

Вĕсене каçхи 10 сехетрен пуçласа ирхи 6 сехетчен эрех сутма чармалла мар-ши текен шухăш пур. Кун хыççăн килсенчи «спирт завочĕсем» хăйсен «производствине» хăпартса ямĕç-ши? Шутламалли çук мар кунта. Ларура Чăваш Республикин Патшалăх Канашне спирт пур шĕвекпе килте сутă тăвакансене памалли штраф калăпăшне пысăклатма ыйтса çырупа тухмаллии çинчен те каларĕç.

Эрехне вара чăннипех те ĕçес тесех ĕçетпĕр пулмалла. Иртнĕ çул республикăра кашни çын пуçне вăтамран 17,1 литр эрех ĕçнĕ. Кунта тин çуралнă ачасемпе пач ĕçмен çынсен шучĕ те кĕрет вĕт. Пирĕн район вара республикăри районсен списокĕнче çӳлтен 5-мĕш йĕркере тăрать. Кунта ялсенчи уйрăм çынсен точкисенче сутакан спирта, сăмакуна шута кĕртмен. Мăн Сĕнтĕр райпо председателĕ Л.П. Майкова каланă тăрăх, эрехпе тивĕçтерекен заводсем хăйсен продукцине райпосене заявкăсем тăратиччченех сĕнеççĕ. Вĕсен сутмалла. Вĕсен – бизнес. Райпо магазинĕсенче пахалăхсăр эрех сутманни кăна кăшт лăплантарать.

Ларура районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Т.А. Антонова ĕçпе тивĕçтересси, хушма ĕç вырăнĕсем тăвасси епле пулни çинчен каласа пачĕ. Юрий Александрович ку ыйтупа чăннипех те тимлĕн ĕçлемеллине палăртрĕ.

Пирĕн хамăр сывлăх çинчен хамăрăнах шутламаллине манса каймалла мар пуль. Ĕç çук тесе, пурнăç йывăр тесе алла черкке тытнипе вăл çăмăлланмасть. Ачасенпе хамăрăн пурнăçа пĕтерни кăна. Сывă пурнăç йĕркипе пурăнма паян Муркашра пур условисем те пур. Физкультурăпа спорт комплексне çӳрекенсен йышĕ ӳссех пырать. Ялсенче пурăнакансен те спортзалсенче пушă вăхăта усăллă ирттерме ӳркенмелле мар кăна. Хамăрăн сывлăх та, пурнăç та хамăрăн алăрах иккеннине асра тытни кирлех пуль.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Йышăну**

# Транспорт çӳрессине чакараççĕ

Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2009 çулхи мартăн 5-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çурхи ейӳ вăхăтĕнче çулсем çинчи хăрушлăха, çулсем пăсăлассине чакарас тата çулсем çинчи искусствăлла сооруженисене сыхласа хăварас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕ мартăн 30-мĕшĕнче ятарлă йышăну кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн апрелĕн 10-мĕшĕнчен тытăнса майăн 8-мĕшĕччен пысăк йывăрăшлă автотранспорт хатĕрĕсене кашни ось çине тивекен йывăрăша кура район харпăрлăхĕ шутланакан автоçулсем çинче çӳрессине вăхăтлăх чакараççĕ. Пĕр ослĕ техникăн вăл 5 тс (50 кН), икĕ тата виçĕ ослисен кашни ось çине 4 тс (40 кН) ытла пулмалла мар.

Капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕ подряд организацийĕсемпе пĕрле муниципаллă çулсем çинче ятарлă знаксем вырнаçтарма тивĕç.

Çул çӳреме тӳлевсĕр пропусксене çунтармалли-сĕрмелли материалсем турттаракан, заводсенчен ял хуçалăх техники тиесе килекен, медицина тата ветеринари препарачĕсем, вăрлăх турттаракан тата ытти хăш-пĕр ятарлă автомашинăсем валли кăна параççĕ.

Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхне Е.И. Плечова районти çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн комиссийĕпе пĕрле районти çулсем çинче çӳремелли режима пăхăннине тĕрĕслесе тăрассине йĕркелеме хушнă.

Асăннă йышăну мĕнле пурнăçланнине район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г. Никитин тĕрĕслесе тăма тивĕç.

**Прокуратура материалĕсем тăрăх**

# Суя пурнăç нумайлăха-ши?

2008 çулхи январĕн 20-мĕшĕнче РФ Прокуратури çумĕнчи Чăваш Республикинчи следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайне «Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паркан вăтам шкул» муниципаллă вĕрентӳ учрежденийĕн директорĕ И.А. Иванов тата унăн вĕрентӳпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ К.П. Сорокина тĕлĕшпе уголовнăй ĕç пуçарас пирки материал тăратнă. Сăмах кунта вĕсем РФ Уголовнăй Кодексĕн 292-мĕш статйипе пăхнă преступлени туни пирки сăмах пырать.

Следстви тĕрĕслевĕ çавна кăтартса пачĕ. И.А. Иванов А.Ю. Сорокина ĕçе илнĕ тесе суя справка хатĕрленĕ. Асăннă справка вара А.Ю. Сорокина çар службине каймалли вăхăта тăсма кирлĕ пулнă. Паллă ĕнтĕ, И.А. Иванов хăйĕн коллегине К.П. Сорокинана «пулăшмасăр» тăма пултарайман.

Çапла вара кунта асăннă виçĕ çын та саккун йĕркине пăснă. Пĕри – суя документсем хатĕрлесе çар службинче пулмалли тивĕçе пурнăçлассинчен пăрăннăшăн, тепри – суя документсем хатĕрлеме хĕтĕртнĕшĕн, виççĕмĕшĕ – суя документсем хатĕрлесе панăшăн.

РФ Уголовнăй Кодексĕпе килĕшӳллĕн асăннă преступлени ытлашши йывăрах мар преступленисен шутне кĕрет. Унпа килĕшӳллĕн преступлени тунăранпа икĕ çул иртнĕ пулсан, çынна уголовнăй майпа айăпласинчен хăтарма пăхнă. И.А. Иванов, К.П. Сорокина, А.Ю. Сорокин тунă преступлени шăпах çав шута кĕрет. Апла пулин те преступлени вăл преступленипех юлать. Саккуна пăсни вара никама та чыс тумасть.

# Асăрханусăрлăха пула – инкек

Кăçалхи мартăн 23-мĕшĕнче следстви пайне тăратнă материалта палăртнă тăрăх, Отаркка ялĕнче пурăнакан Николай Петрович Аверкиева больницăна илсе пынă. Хăйĕнчен ыйтса пĕлнĕ тăрăх вăл февралĕн 25-мĕшĕнче хăйсен ялĕнчи çынсемпе пĕрле Чапаев яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕпе И.Ю. Захаровпа килĕшӳ туса Шарпаш ялĕ çывăхĕнчи хальхи вăхăтра усă курман КЗС территорийĕнчи объектсене сӳтнĕ çĕрте ĕçленĕ. Кăнтăрла иртни 3 сехет тĕлĕнче сарай çийĕнчи хăмасене вистенĕ чухне хăйĕн асăрханусăрлăхне пула çурăмĕпе юр çине ӳкнĕ. Çавна май суранланнă.

Хальхи вăхăтра ку факта патшалăх ĕç инспекцийĕн специалисчĕсем тĕрĕслеççĕ.

**С. КОШКИН,**
**РФ Прокуратури çумĕнчи Чăваш Республикинчи следстви комитечĕн следстви управленийĕн Етĕрнери районсем хушшинчи следстви пайĕн аслă следователĕ.**

**Çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси ларăвĕнчен**

# Тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тумасан...

Хăйĕн иртнĕ ларăвĕнче асăннă комисси Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи культура учрежденийĕсем çул çитмен çамрăксемпе епле ĕçлесе пынине тишкерчĕ. Çавăн пекех 21 административлă ĕç пăхса тухрĕ.

Пăхса тухнă кашни тĕслĕхре уйрăм çын шăпи. Ача шăпи, çав çемьери йывăр шухăш... Акă нумаях пулмасть реабилитации палатине илсе килнĕ ачасен ашшĕпе амăшĕ. Малалла ачасене йĕркеллĕ пăхса пурăнас шухăш пур-и? Ачисене йĕркеллĕ пăхма шутлаççĕ-и? Ашшĕ тӳрре тухма хăтланчĕ пулсан, амăшĕ шăл шуррине те кăтартмарĕ. Ларура вĕсене хуçалăхра ĕçе вырнаçмалли, ачисене ача садне çӳретмелли çинчен асăрхаттарчĕç. Ачасене реабилитаци палатинчен киле илсе тухиччен килĕнче вĕсене çимелли пуррипе çуккине тĕрĕслессине палăртрĕç. Çакăнта каланă ырă улшăнусем пулмасан, вĕсене ашшĕ-амăшĕн прависенчен хăтарас ыйту тухса тăма пултарать.

– Урăх ĕçместĕп, тархасшăн ачана туртса илмелле ан тăвăр, – куççуль витĕрех тархаслать 29 çулхи хĕрарăм. Çак сăлтавпах вăл аслă ачи тĕлĕшпе амăшĕн прависĕр юлнă. Малалла тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тумасан, кӳмере выртакан ачисĕр те тăрса юласса ăнланать пулмалла. Ахаль куççуль çеç ан пултăрччĕ çакă. Йăнăша ăнланса илни çинчен калаканни пултăрччĕ.

Алла черкке тытнă чухне çакă ачасем çине япăх витĕм кӳни çинчен аса та илмеççĕ пулĕ. Ачисен те эрех тутанса пăхас шухăш пырса кĕресси çинчен. Ку тĕслĕхре шăпах çапла пулнă та: ашшĕ лартса хăварнă эрехе арçын ача урама илсе тухать.

– Камăн кăмăл пур, тутанса пăхăр.

Пĕри тутанса пăхать – сурса пăрахать. Тепри тутанать, виççĕмĕшĕ те сыпса пăхать... Юрать-ха, тăн çухатнă юлташне вĕсем пăрахса хăварман... Ку тĕслĕх эрехпе наркăмăшланнă ача реанимацине лекнипе вĕçленет. Тав Турра, тухтăрсем çăлса хăвараççĕ ăна.

– Мăшăрăн 40 кунне асăнтăмăр. Кун пек эп ĕççес пурăнман-ха, – тӳрре тухма тăрăшать эрех илсе тухнă ачан ашшĕ.

Çак тĕслĕх унта пулнисемшĕн те, хаçат вулакансемшĕн те ун пек тума юраманни, эрех çамрăк организмшăн питĕ пысăк хăрушлăх кăларса тăратни çинчен калакан урок вырăнне пултăрччĕ.

– Ман арçын ачасем çук-ха, ун пекки пулмасть, – тесе хăйсене лăплантарĕç хăшĕсем.

Анчах куçăм тапхăрĕнче хĕр ачасем те йăнăш çул çине тăрас хăрушлăх пурри çинчен калать пулĕ иртнĕ ларура пăхса тухнă тепĕр тĕслĕх. Хĕр ачасем шкула çӳреме пăрахнă, çитĕннисен пурнăçĕ илĕртӳллĕн туйăнма пуçланă. Çакăн сăлтавне шырама пуçласан акă мĕн палăрчĕ – вĕсем япăх «тантăшсен» витĕмне лекнĕ. Мĕн пысăкăш трагеди ачашăн. Чăнкă çыраналла туртакан çул пуçламăшĕ. Ашшĕ-амăшне чуна уçса пани, тивĕçлĕ органсенчен пулăшу ыйтни кăна кунта инкекрен çăлса хăварма пултарнине асра тытмалла пуль кун пек чухне.

Воспитанин хăш сыпăкĕнче çип çӳхерех пулчĕ-ши? Çак ыйту тавра шутлама хистеççĕ çак тĕслĕхсем. Тата тĕрĕс пĕтĕмлетӳсем тума.

**Л.ТУКТИНА.**

**Объявления • Пĕлтерӳсем**


**Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, office@ingenercheb.ru, тел.: 63-13-49 выполняются кадастровые работы по выделу земельных участков в счет долей в праве общей собственности на земельные участки из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенных в Чувашской Республике, Моргаушском районе, на территории СПК «Оринино», поле № 5, полевой севооборот № 1.**

**Заказчиком кадастровых работ является Сидюшкина Таисия Федоровна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Чамыши, ул. Первая, д. 60.**

**Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Падаккасы, ул. Школьная, д. 3 «05» мая 2009г. в 11 часов.**

**С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с «20» апреля 2009 г. по «27» апреля 2009 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов д. 33 а, офис 303.**

**Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: участки, находящиеся в общей долевой собственности на территории СПК «Оринино», поле № 5, полевой севооборот № 1; земли Орининского сельского поселения.**

**При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.**

**Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, office@ingenercheb.ru, тел.: 63-13-49 выполняются кадастровые работы по выделу земельных участков в счет долей в праве общей собственности на земельные участки из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенных в Чувашской Республике, Моргаушском районе, в границах ранее действовавшего КП им. Кирова, поле № 3, полевой севооборот № 2.**

**Заказчиками кадастровых работ являются Егорова Ольга Порфирьевна, Егоров Николай Петрович, Степанов Георгий Алексеевич, Степанова Роляна Васильевна, Николаева Ирина Амвросьевна, Николаев Александр Самсонович, Иванова Елизавета Ивановна, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Сене-Хресчен.**

**Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Тораево, ул. Базарная, д.5 «05» мая 2009г. в 11 часов.**

**С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с «20» апреля 2009 г. по «27» апреля 2009 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов д. 33 а, офис 303.**

**Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: участки, находящиеся в общей долевой собственности в границах ранее действовавшего КП им. Кирова, поле № 3, полевой севооборот № 2; земли Тораевского сельского поселения.**

**При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.**

**Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, office@ingenercheb.ru, тел.: 63-13-49 выполняются кадастровые работы по выделу земельных участков в счет долей в праве общей собственности на земельные участки из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенных в Чувашской Республике, Моргаушском районе, в границах ранее действовавшего СПК «Новая Юнга», поле № 4, полевой севооборот № 2.**

**Заказчиками кадастровых работ являются Тепеев Рюрик Георгиевич, Тепеев Михаил Рюрикович, Тепеев Сергей Рюрикович, Тепеева Раиса Васильевна, Вазикова Лена Платоновна, Шутеева Тамара Энксовна, Шутеева Лидия Михайловна, Шутеева Лидия Александровна, Шутеева Валентина Ивановна, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга.**

**Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Малые Чуваки, д. 34 «05» мая 2009г. в 11 часов.**

**С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с «20» апреля 2009 г. по «27» апреля 2009 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов д. 33 а, офис 303.**

**Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: участки, находящиеся в общей долевой собственности в границах ранее действовавшего СПК «Новая Юнга», поле № 4, полевой севооборот № 2; земли Юнгинского сельского поселения.**

**При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.**

**Кадастровым инженером ООО «НПП «Инженер», адрес: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, office@ingenercheb.ru, тел.: 63-13-49 выполняются кадастровые работы по выделу земельных участков в счет долей в праве общей собственности на земельные участки из состава земель сельскохозяйственного назначения, расположенных в Чувашской Республике, Моргаушском районе, в границах ранее действовавшего КХ «Хлебороб», поле № 6.**

**Заказчиками кадастровых работ являются Архипова Лузья Андреевна, Архипов Александр Геннадьевич, Архипов Андрей Александрович, проживающие по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Хоп-Кибер, ул. Складская, д. 50.**

**Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границ состоится по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Тренькино, ул. Новая, д. 5 «05» мая 2009г. в 11 часов.**

**С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов, д. 33а, офис 303.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с «20» апреля 2009 г. по «27» апреля 2009 г. по адресу: 428022, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Декабристов д. 33 а, офис 303.**

**Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: участки, находящиеся в общей долевой собственности в границах ранее действовавшего КХ «Хлебороб», поле № 6; земли Ильинского сельского поселения, земли Моргаушского района.**

**При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.**